Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

13 (7438) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи февралĕн (нарăс) 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пресс-конференци

## Тарăн та çирĕп пĕлӳшĕн



*Ĕнер район администрацийĕн актăвăй залĕнче шкулсен, шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсен ертӳçисен, ял тăрхĕсен пуçлăхĕсен, çĕнĕлĕхсемпе усă куракан учительсен, класс ертӳçисен, предмет учителĕсен интернет-конференцийĕ иртрĕ. Унăн теми – «1997-2007 çулсем – вĕрентӳ пахалăхĕн çĕнĕ çул-йĕрĕ».*

*Сăн ӳкерчĕкре: конференцие хутшăнакансен пĕр ушкăнĕ.*

*Интернет-коференци ĕçĕ пирки тĕплĕнрех çитес номерте.*

*Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.*

Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ КĂÇАЛХИ ФЕВРАЛĔН 13-МĔШĔНЧЕ КАШНИ ĔНЕРЕН СĔТ ВĂТАМРАН МĔН ЧУХЛĔ СУСА ИЛНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Кашни ĕне пуçне сĕт сунă. 2. Иртнĕ çулхи çав вăхăтра сунă (килогрампа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 6,9 | 8,9 |
| «Волга» | 9,4 | 9,0 |
| «Восток» | 11,9 | 12,9 |
| «Герой» | 16,6 | 11,4 |
| К. Иванов яч. хис. | 4,9 | 3,7 |
| Ильич яч. хис. | 12,2 | 8,8 |
| Ленин яч. хис. | 7,8 | 11,9 |
| ООО АФ «Лидер» | 9,3 | 13,9 |
| ООО АФ "Дружба" | 10,5 | 10,7 |
| «Оринино» | 15,1 | 12,4 |
| «Передовик» | 6,0 | 6,6 |
| «Свобода» | 13,6 | 13,0 |
| «Сеятель» | 6,2 | 6,5 |
| Суворов яч. хис. | 14,9 | 11,6 |
| ООО АФ "Рассвет" | 7,4 | 8,3 |
| «Ударник» | 12,4 | 11,6 |
| Чапаев яч. хис. | 8,7 | 7,1 |
| «Чемеево» | 9,7 | 10,0 |
| Чкалов яч. хис. | 14,6 | 1,2 |
| КФХ Михайлов | 4,0 | 5,3 |
| КФХ Отенов | 1,6 | 0 |
| **Районĕпе** | **10,7** | **10,0** |

Республикăра

## “Дача амнистине” – симĕс çутă

Февралĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе эрне пуçламăшĕнче йĕркелекен йăлана кĕнĕ планерка иртнĕ.

Николай Федоров вырсарни кун иртнĕ Пĕтĕм Раççейри йĕлтĕрçĕсен “Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2007” чупăвне пысăка хурса хакланă. Шупашкарта старта 22134 йĕлтĕрçĕ тухнă, Çĕнĕ Шупашкарта – 5198. “Вĕсем – сывă, ăнтăлуллă тата шанчăклă çынсем. Вĕсем хăйсен çемйисемшĕн те, ĕç коллективĕсемшĕн те, пирĕн республикăшăн та шанчăклă çынсем. Манăн çак пĕлтерĕшлĕ те пысăк ĕçĕн йĕркелӳçисене те, унта хутшăннисене те тав тăвас килет”, – тенĕ Президент.

Чăваш Ен Президенчĕ республикăра федерацин çĕр хутшăнăвĕсене йĕркелекен саккунĕсем мĕнле пурнăçланнипе кăмăлсăрри пирки каланă. Калăпăр, Шупашкар хулинчи сад хуçисен организацийĕсенче темиçе теçетке гражданин çеç хăйсен çĕр лаптăкĕсене рагистрацилеме пултарнă. Документсем хатĕрлемелли процедура хакĕ – темиçе пин тенкĕ таран. “Ку – йĕркесĕрлĕх! Муниципалитетсем граждансене хăйсен саккунлă прависемпе тивĕçтернĕ май укça тăваççĕ-и?” Чиновниксен çынсен ыйтăвĕсене кĕске вăхăтра татса памалла, вĕсене пулăшмалла, чăрмавсем кăларса тăратма юрамасть”, – тенĕ Николай Федоров.

Республика ертӳçи Правительство председательне Сергей Гапликова темиçе кун хушшинче ĕç-пуça тишкерсе ку енĕпе йĕрке тума хушнă.

Пĕрремĕш вице-премьер – финанс министрĕ Николай Смирнов Пĕтĕм тĕнчери банк ушкăнĕн финанс корпорацийĕн делегацийĕн Чăваш Енри ĕçлĕ визичĕ çинчен евитленĕ. Визитăн тĕп ыйтăвĕ – республикăна Чăваш Ен Президенчĕн “Чăваш Республикинче автомобиль çулĕсен сечĕн строительствине хăвăртрах вĕçлемелли мерăсем çинчен” указне пурнăçлама инвестицисем илсе килесси. Вăл инвестицисем илсе килессипе çыхăннă йышăну пирĕн майлă пуласса шаннине палăртнă, мĕншĕн тесен кредит комитечĕ Чăваш Ен Правительствин проектне малтанах ырланă.

**ЧР ПА пресс-служби.**

Президент стипендине тивĕçнисем

## Пултаруллă яш-кĕрĕм

***Чăваш Республикин Президенчĕн 2007 çулхи нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче кăларнă хушăвĕпе килĕшӳллĕн вĕренӳре, тĕпчев, наука, пултарулăх, производство, управлени ĕçхĕлĕнче тата бизнес-проектсем тăвас енĕпе курăмлă çитĕнӳсем тунă çамрăксемпе студентсем 2007 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен раштав уйăхĕн 31-мĕшĕччен кашни уйăхра 1000 тенкĕпе танлашакан ЧР Президенчĕн стипендине илсе тăрĕç. Пирĕн районтан камсем тивĕçнĕ-ха çак хавхаланăва? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистĕнчен Г.Г. ЛЮБИМОВАРАН.***

**– Галина Геннадьевна, районти миçе хастар çамрăк кăçал ЧР Президент стипендиачĕ пулса тăчĕ?**

– Чăнах та, çак стипендие пултаруллă, пуçаруллă, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăракан яшсемпе хĕрсене кăна параççĕ. Çавăн пек пысăк хисепе районтан çаксем тивĕçрĕç:

Вера Соколова, Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен спорт училищин вĕренекенĕ;

Татьяна Моисеева, А. Игнатьев ячĕллĕ пысăк спорт ăсталăх шкулĕн вĕренекенĕ;

Любовь Рыжкова, Муркаш район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн методисчĕ;

Татьяна Кириллова, Муркашри халăха социаллă енĕпе тивĕçтерекен центрăн пай ертӳçи;

Елена Иванова, Муркаш районĕн ЗАГС пайĕн тĕп специалисчĕ;

Сергей Квасов, районти шалти ĕçсен пайĕн оперуполномоченнăйĕ;

Ольга Петрова, Муркашри “Солнышко” ача-пăча сачĕн воспитателĕ;

Алексей Алексеев, “Свобода” ЯХПК-ăн тракторист-машинисчĕ;

Алексей Артемьев, “Восток” ЯХПК-ăн тракторист-машинисчĕ;

Александр Васильев, “Моргаушскавтотехсервис” АУО каменщикĕ;

Наталья Константинова, Муркашри чăх-чĕп фабрикин специалисчĕ;

Мария Лисова, Йӳçкасси шкулĕн вĕренекенĕ;

Надежда Семенова, Йӳçкасси вăтам шкулĕн вĕрентекенĕ.

**– Куратăр ĕнтĕ, çамрăксем хушшинче пултаруллă, мал туртăмлă, чылай конкурссенче çĕнтернĕ яшсемпе хĕрсем пур. Анчах та нумайăшĕ ЧР Президент стипендине илес йĕркене пĕлмест, паллаштарсамăр тархасшăн çак йĕркепе.**

– ЧР Президент стипендине илес тенкенсен районта çеç мар, республика тата çӳлерех шайри конкурссемпе олимпиадăсен çĕнтерӳçисем пулмалла. Ăна вара тивĕçлĕ документсемпе çирĕплетмелле. Вĕренӳ, тĕпчев, наука, творчество, ертсе пырас, спорт, ӳсĕмлĕх ĕçĕнче, бизнес-проектсем çырса хӳтĕлес ĕçре палăрмалла пысăк утăмсем тунă 14 çултан пуçласа 30 çулхи çамрăксене параççĕ. Ĕç, вĕренӳ вырăнĕнчен лайăхпа хаклакан характеристика çителĕксĕр. Хăвăр çитĕнĕвĕрсене çирĕплетекен документсене ятарлă папкăна пухмалла, унпа пĕрле çаксем пулмалла: тăратнă организаци ертӳçи алă пусса çирĕплетнĕ çыру-представлени; 3-4 сантиметрлă сăн ӳкерчĕкпе характеристика; профсоюз, вĕренӳ канашĕн, предприяти коллективĕн, учрежденин, организацин, обществăлла е творчествăлла пĕрлешĕвĕн анлă ларăвĕн протоколĕ; паспорт копийĕ. Çак документсен пуххине ĕç вырăнне е тӳрех пирĕн пата илсе килмелле. Вĕсене малтан районта пăхса тухатпăр, хыççăн республикăна яратпăр. Документсене октябрĕн 1-мĕшĕччен тăратмалла. Стипендие пур сферăра вăй хуракансем те тивĕçме пултараççĕ.



Çавăн пекех Чăваш Республикин Ял хуçалăх Патшалăх премийĕ пур. Ăна тăвата номинацинче пама палăртнă:

1) наука, техника, производство;
2) вĕрентӳ, çамрăксен политики;
3) литература, культура тата искусство;
4) сывлăха сыхлас ĕç, тавралăха сыхлас, физкультура тата спорт.

Кунта вара 30 çултан иртмен çамрăкăн хăйĕн вăл е ку сферăра çĕнĕ меслет шыраса тупмалла, ĕçре çирĕплетмелле. Документсене апрелĕн 1-мĕшĕччен хатĕрлесе çитермелле.

Чăваш Республикин Министерстви ял хуçалăх предприятийĕсенче ĕçлекен специалистсем хушшинче тĕрлĕ конкурссем ирттерет. Пирĕн министерствăпа килĕшӳ тунă хыççăн çĕнелĕх кĕртрĕç. “Çамрăк осеменатор” тата “Çамрăк доярка” номинацисем турĕç. Çавăн пекех Шалти ĕçсен министерстви ирттерекен конкурсра “Çамрăк участковăй” номинаци хутшăнчĕ. Апла пулсан, çӳлерех асăннă çĕнĕлĕхсем çамрăксене тăрăшуллăрах ĕçлемелли, пултарулăха туптамалли, конкурссене хутшăнса хăвăр ăсталăха кăтартма пĕлмелли çинчен калаççĕ.

**– Стипендиатсемпе мĕнле ĕçсем туса ирттерме палăртатăр-ха?**

– Иртнĕ çулхи стипендиатсемпе эпир чылай ĕç туса ирттертĕмĕр. Кăçалхисемпе пурнăçлама пăхнă ĕçсем вара татах та чылай. Чи малтанах вĕсене пĕрлехи çамрăксен форумне пухăпăр, свидетельствăсем парăпăр. Ăна февралĕн 20-мĕшĕнче ирттерме пăхрăмăр. Вĕсем пуçаруллă çамрăксем пулнине тĕпе хурса, тĕрлĕ проектсем çырăпăр, районти тата унăн тулашĕнчи мероприятисене йĕркелĕпĕр, хутшăнăпăр.

Юлашкинчен манăн вара çакна палăртас килет. Паянхи пурнăç ытла та хăвăрт улшăнать, çĕнĕлĕхсене алла илме хистет. Çавăнпа та, уйрăмах çамрăксен, лăпланса лармалла мар. Ăсталăха туптамалла тата ăна ыттисене кăтартма пĕлмелле. Çӳлти шайри ĕçченсен алăран тытса çутта кăларасса кĕтсе ларас марччĕ. Пирĕн пай шăпах сирĕн валли ĕçлет, енчен те ыйтусем пулсан килĕр, ан вăтанăр. Кам вара стипендиатсен йышне лекеймерĕ, ан кулянăр. Çĕнĕ çитĕнӳсем туса çитес çул валли документсене тăратма пулать. Паллах, пурте çĕнтерӳçĕ пулаймĕ, чи кирли – хутшăнни. Сăмах илнипе усă курса пурне те Çветтуй Валентин кунĕ ячĕпе саламлатăп, ăнăçу сунатăп. Тĕрĕссипе вара çак куна кашни хăйне май йышăнать. Кам шӳтлесе ирттерсе ярать, кам юрату авăрне путас кăмăллă, тепри пачах ăна йышăнмасть.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: кăçалхи стипендиатсенчен пĕри – Любовь Александровна Рыжкова.**

## Чăваш Ен футболне аталантарассишĕн




Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Раççей футбол союзĕн президенчĕпе, Федераци Канашĕн Çамрăксемпе спорт енĕпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕпе Виталий Муткопа тĕл пулнă. Тĕл пулура Чăваш Енри футбол аталанăвĕпе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Чăваш Республикинче футбола аталантарас енĕпе ĕçлекен попечительсен канашне туса хума йышăннă, ăна Николай Федоров Президент тата футбол союзĕн ертӳçи Виталий Мутко ертсе пычĕç.

Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче Пĕтĕм Раççейри “Раççей футбол союзĕ” общество организацийĕ тата Чăваш Республики тачă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă.

Юбилей

### Саламлатпăр



Юратнă мăшăрăма, ытарайми аннене, хунямана, ырă кăмăллă кукамая, асаннене, хисеплĕ тăхлачăна – Атапай ялĕнче пурăнакан **Вера Михайловна БЛИНОВАНА** 60 çулхи юбилейпе саламлатпăр.

Пурнăçра çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Аннеçĕм, анне! Эсĕ пирĕншĕн чи хаклă та чи юратнă çын. Тавах сана пире ӳстернĕшĕн, çын тунăшăн! Эс пурри пирĕншĕн телей!

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, тăхлачисемпе тăванĕсем.**

<u>**Çырăнтару – 2007**</u>

## Мартăн 31-мĕшĕччен – кивĕ хакпах

**Хăвăрт иртет вăхăт. Симерĕмĕр те, Çĕнĕ çул уявĕсем те хыçа юлчĕç, февраль уйăхĕн çуррине те çитрĕмĕр. Апла пулсан кăçалхи иккĕмĕш çур çул валли хаçат-журнал çырăнасси пирки те шутлани ытлашши пулмĕ.**

**Сире çавна пĕлтерме васкатпăр. Мартăн 31-мĕшĕччен районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата унчченхи хакпах – ултă уйăха 148 тенкĕ те 26 пуспа çырăнса илме май пулĕ. Апла пулсан хаçат çырăнассине кая хăварар мар, почта çыхăнăвĕн районти узелĕпе районти çыхăну уйрăмĕсене çитме, почтальонсемпе тĕл пулма васкар. Малашне те сирĕнпе пĕрле пуласса шанса тăратпăр.**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ.**